К с(Чув)
С30

Юрий СЕМЕНТЕР

# ХУРКАЙӐК ҪУЛӖ

Ч-38858



Сӑвӑ-юрӑ
Баллада
Легенда
Поэма

## ШĔНКРЕН

Баллада

*Шĕнкрен лекрĕ-ши сана,*
*Сăнă тиврĕ-ши сана?*

Халăх юрринчен

*Шĕнкрен – пуля.*

Ашмарин словарĕ, 17-мĕш кăларăм

Аслати кĕрлет, тăвăлсем килет,
Сарă хĕвеле çавăрса илет.
Ах, çил мар çав ку, тăвăл мар çав ку,
Вăрçăях сасси чĕрене çурать.
Вăрçăях сасси чĕрене çурать,
Çĕр киле кĕрет, пин киле кĕрет,
Хура аллипе хурлăхне кӳрет,
Инкекпе синкек валеçсе çӳрет.

Пирĕн Марьяппа хулара пурнать,
Заводра станок умĕнче тăрать.
Заводра станок умĕнче тăрать,
Номерлĕ цехра вăл патрон тăвать.
Ӳснĕ çуралса чăваш ялĕнче,
Чăваш ялĕнче, Ункă хĕрринче,
Ĕçченех çынсен туслă йышĕнче.
Колхоз шкулĕнче хут вĕреннĕ вăл,
Çăмăл аллипе тĕр тĕрленĕ вăл,
Çум çумланă вăл, утă çулнă вăл,
Тыр пиçсе çитсен тырă вырнă вăл,

Пăрчăкан пекех йăрă пулнă вăл.
Юррине илтсе ял мухтаннăскер,
Ташшине курса яш ăмсаннăскер,
Вăхăчĕ çитсен хăйĕн савнине
Хула каччине Янтуш Яккуне
Туй – шилĕкпелех качча тухнă вăл,
Шупашкар кинĕ пулса тăнă вăл.
Çамрăках çемьен тахĕ ăнăçнă,
Кин завод ĕçне хăвăрт хăнăхнă,
Деталь ăсталать ун вăр-вар алли,
Машини пулать – тырă акмалли.
Тырă акмалли, çăкăр тумалли,
Ĕмĕр никĕсне тытса тăмалли.
Майĕпен вĕсен ывăл çуралать,
Çулпа мар, кунпа вăл маттурланать,
Вуннăра чухнех – пирĕн Саватер –
Пĕтĕм шкулĕпе паллă пионер.
Ăсĕпе çеç мар, ĕçĕпе правур,
Вăйĕ кирлĕ чух ашшĕ вăйĕ пур,
Чунĕ кирлĕ чух амăш чунĕ пур.
Кам вĕренӳре чи малта пырать?
Янтушов, паллах, хамăр Саватер.
Кам хорта хитре тенорпа юрлать?
Янтушов сасси уçă çавхатер.
Атăл урлă кам каçаять ишсе?
Кам парне илет питĕ тĕл персе?
Янтушов тени янăрать кăна...
Кам юратмĕ-ха ун пек ачана?

Ашшĕ савăнать, амăш савăнать,
Пĕчĕкçĕ кил-йыш туслăн пурăнать.
Ах, телей тени вĕçсĕр мар -тăр çав, –
Гитлер вăрçăпа килчĕ-тухрĕ ав.
Янтушов Якку çакрĕ кутамкка.
Çакрĕ кутамкка, кайрĕ салтака.
Кайрĕ вут-вăрçа савнă упăшка,
Çичĕ ют çулне пӳлес шухăшпа,
Кайрĕ инçете Атăл хĕрринчен,
Пăхрĕ хурланса сăрлă чӳрече.
Хуçнă йывăç пек хуçăк кăмăлпа
Йăлтăр куçульпе юлчĕ Марьяппа.
Ĕнтĕ фронт валли, çĕнтерӳ валли
Завод кăларать вăрçă япали.
Марьяппа станок умĕнче тăрать,
Номерлă цехра вăл патрон тăвать.
Вăл пĕлет: патрон – çын вĕлермелли,
Пурнăç хĕлхемне пăч! сӳнтермелли,
Ӳтпеле пĕве сусăрлатмалли,
Сусăрлатмалли, юн юхтармалли,
Хураях çĕре ылтăн тырă мар,
Сарă вăрлăх мар, хурлăх акмалли.
Вăл туять: патрон – сивĕ япала.
Çын тени унтан аслă пулмалла,
Аслă пулмалла, ăслă пулмалла,
Вăл пурри çинчен тăмăч манмалла.
Манăттăмăрччĕ – фашист сĕкĕнет,
Ялсене таптать, хулине ишет,
Ватти-вĕттине персе вĕлерет,

Çамрăк хĕрсене тыткăна илет.
Ирĕксĕртенех – шĕнкрен тумалла,
Ирĕксĕртенех – тупă тумалла,
Тупă тумалла, йĕтре хумалла.
Çичĕ ют пуçне ăшаламалла.
Эх, этем, этем, мĕн çитмест сана?
Тĕнче анлăшĕ ансăр тетĕн-им,
Çул тӳпе маччи лутра тетĕн-им,
Кăвак тинĕсӳ ăшăх тетĕн-им?
Каласам, этем, мĕн çитмест сана?
Мĕншĕн хăв çине ал хуратăн эс,
Хĕçпăшал – кăрал кăларатăн эс,
Аслă çĕр тавра вирт яратăн эс?
Этемпе этем вăрçă вăрçнинне
Кам калайĕ-ши тĕрĕс хисепне?
Ухă сăннипе пĕтрĕ пин-пин чун,
Атăл шывĕ пек юхрĕ чĕрĕ юн,
Сăнăпа-йĕппе лăпланмарĕ ав,
Малаллах сикет шухăшлав-шырав,
Халь инçе вĕçен йĕтресем тăван,
Самолетпала бомбуна тăкан,
Тар хăвачĕпе вилĕм сапалан,
Газ çавипеле халăха çулан...
Каласам, этем, мĕн çитмест сана,
Хăвăн ăсупах пĕтерен хăвна,
Хăвăн ĕçӳпех сăтăрлан хăвна,
Хăвăн аллупах эс пăван майна?

Марьяппа тимлет – канăçа пĕлмест,
Пĕтĕм йыш тимлет – канăçа пĕлмест,

Фронта ытларах шӗнкрен памалла,
Фашиста часрах тытса чармалла.

Ҫавӑнпа аппа кунӗ-кунӗпе
Вӑрманта йӗкел шӗкӗлченӗ пек
Пинӗ-пинӗпе патрон пуҫтарать,
Патрон пуҫтарать, вӑрҫа ӑсатать.
Упӑшки патне, Якку аллине,
Ун юлташӗсен паттӑр аллине
Тӑхлан кучченеҫ ҫитессе шанать,
Тӑшмансен пуҫне ҫиессе шанать.

Завода пӗрре ҫар ҫынни пырать.
Янтушована, Марьене, шырать,
Марьене тупать, тав ӗҫӳшӗн, тет,
Тав ӗҫӳшӗн, тет, тӑрӑшнишӗн, тет,
Сталин грамоти килчӗ, йышӑн, тет,
Ӳлӗм те тимле ҫӗнтерӳшӗн, тет,
Савӑнать аппа, хӗпӗртет аппа,
Цехӗнче ӗҫлет ҫӗнӗ вӑй-халпа,
Тыл пулӑшнипе фронт та вӑй илет,
Фрон та вӑй илет, тӑшман тӑр-р чӗтрет,
Ури айӗнчи ҫӗрӗ кисренет.
Пуҫне каҫӑртса килекен хурах
Парапппан ҫемми калаймасть вӑрах,
Ҫаврӑнма тивет унӑн каялла,
Тытӑҫма тивет урнӑ кайӑкла.
Шӑп ҫав вӑхӑтра пирӗн Марьяппа
Волхов фронтӗнчен хура хут илет.
Упӑшки, Якку, хаяр тӑшманпа

Çапăçса пуçне хунине пĕлет.
Çĕрĕпе йĕрет, кунĕпе йĕрет,
Хăй çавах цехра халăхпа ĕçлет.
Кунта кашниннех – хуйхă та инкек,
Пĕтĕм çут тĕнче айăп тунă пек.
Инкек яланах синкек çумĕнче,
Синкек яланах инкек хыçĕнче,
Саватерĕн те ят тухать кĕçех,
Вуннăмĕш класран Сталинград патне
Шăпа çитерет чăваш ачине.
Ах, кунта тăхлан çумăрсем çăвать,
Çĕр çинче вĕри тимĕр çеç чашлать,
Шурă чул çунать, юханшыв çунать,
Вăрçăри этем çав вута чăмать,
Çав вута чăмать, хушнине тăвать,
Хушнине тăвать, хăй чысне упрать,
Тăванах çĕршыв кăкрине хуплать.
Марьяппа шутлать Саватер çинчен.
Хыпарсем итлет Сталинград енчен.
Кĕçĕр тĕлĕкре курнă ывăлне.
Таврара тӳлек. Сарă кĕркунне.
Шупашкар хĕрри. Ват юман кати,
Çулçă хушшинче – йывăç тункати...
Саватер йĕкел пухнă пĕр хутаç.
Йăл кулать ача: «Класс кая юлмасть».
Тунката çинче хутаçне чыхать,
Пĕр кана чыхсан силлесе пăхать:
«Тепĕр вун йĕкел кĕрет анине,
Ав çав купана памăн – ши, анне?»

«Мĕншĕн парас мар, тет пек Марьяппа, –
Килнĕскер, каяр тулли алăпа».
«Тавтапуç, анне» – тет ача чунтан,
Сăмаххи нихçан тухас çук асран.
Тĕлĕкне хуллен тĕшĕлет аппа,
Йĕкел тупсăмне виçет пульăпа.
Ывăлĕн хутне кĕрес кăмăлпа,
Смена вĕçĕнчи çĕнĕ çăмăлпа
Вун патрон тăвать унăн ячĕпе,
Усал тăшманпа çапăç тет чипер,
Тăванах киле таврăн тет чипер...

Лере старшина патрон валеçет.
Перекетлĕр, тет, сахал тивĕçет.
Сисет-ши çакна пирĕн Саватер:
Унăн обойми – амăш тунăскер.
Вăл илет ăна, хăй дискне чикет,
Сахалли те, тет, çук чухне çитет.
Саватер каять çапăçма – вăрçма.
Ĕнер хамăрăн пулнă урама
Паян каялла хушнă тавăрма.
Взвод çĕкленчĕ кар. Сапрĕ шĕл-кăвар.
Нимĕç те перет. Парăнасшăн мар.
Саватер çурта алăкран сикет,
Аслă пўлĕме вирхĕнсе кĕрет.
Ганс перет – лекмест,
Саватер ўкмест.
Саватер çапать –
Гансĕ ыткăнать.

Такăнса каять –
Кĕç сиксе тăрать,
Хăй Саватере
Тапса ӳкерет.
Çапăçать ик яш
Тĕттĕм пӳлĕмре.
Автомачĕсем
Икĕ кĕтесре.
Пĕр кана çĕрте
Çаврăнса илсен,
Вăйпа нихăш те
Çĕнтереймесен,
Иккĕш те сикет
Икĕ кĕтессе,
Пĕр-пĕрне тĕллет
Автомат илсе.
Автомачĕсем
Хăйсен мар иккен,
Иккĕшĕ вĕсем
Ылмашнă иккен.
Пульăн çук чĕри,
Чунĕ-чĕмĕ çук,
Чĕлхи çеç вĕри
Курок турнă чух.

Ганс пăшалĕ халь хăй Ганса тĕллет,
Саватерĕн те хуçине пӳлет.
Çуккă вĕсене чараяс хăват.

Ик курокĕ те харăс туртăнать,
Икĕ пуля шăп харăс ыткăнать,
Ик чĕре шăпах харăс чарăнать.

Ырă шухăшпа тунă патронпа,
Амăшĕн алли хунă пульăпа
Ывăлĕ çапла ик куçне хупать.

Ак мĕнле килет хăш чухне шăпа.
Туйрăн – ши çакна эс, Марье аппа?

*1984*